# Çитĕнӳсем хамăр алăра



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин нумаях пулмасть хăйĕн сăмахĕнче хальхи çăмăл мар условисенче те ял хуçалăхĕ ăнăçлă ĕçлесе пынине, ял ĕçченĕ-сем кăçалхи çуракинче те пысăк хастарлăх кăтартнине, патшалăх ял хуçалăх отраслне малашне те пулăшса пырассине каларĕ. Çитĕнӳсем чăннипех те хамăр алăра. Çакăн тĕслĕхĕ – ял хуçалăхĕ. Раççей юлашки çулсенче апат-çимĕçпе экспортерсен шутĕнче. Эпир халĕ çĕршывĕпе çулсерен 100 миллион тонна ытла тырă туса илме пултаратпăр. Ку тĕлĕшпе кăçалхи прогноз та çакăнтан кая мар. Çакă вăл çĕршывăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвне малалла вăйлатса пыма май парĕ. Ку тĕллеве пурнăçа кĕртсе пыни пĕтĕмпех çĕршыв, халăх ырлăхĕшĕн тăрăшассипе, çынсен пурнăç ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерессипе çыхăннă. Çакăншăн, паллах, аграрлă секторта ĕçлекенсем те вăй хураççĕ. Вăл шутрах – пирĕн районти ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсем те.**

# Çĕнçырмари тăрăшуллă фермер



Хальхи вăхăтра районти вун-вун фермер çĕр ĕçĕпе пурăнать, тырă-пулă çитĕнтерет, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет тата ытти те. Иртнĕ ĕмĕрхи тăхăрвуннăмĕш çулсенче вара вĕсем пăч-пач кăна пулнă. Вĕсенчен пĕри – Çĕнçырма ялĕнчи Вячеслав Владимирович Николаев. Хăюллăн пуçне чикнĕ вăл фермер ĕçне, текех вара пĕр шит те каялла чакман. Малтанах пахча çимĕç туса илнинчен пуçăннă. Унтан таврари ялсенче пурăнакансене шурă çăнăхпа тивĕçтернĕ, арман тытнă. Шухăшланă пек ялан çатма çинчи пек тикĕс пулса пыман чухне те алăсене усман, лайăх-и е начар-и, чăрмавсене çĕнтерсе пыма тăрăшнă, пурнăç «экзаменне» ăнăçлă тытса, кĕрешӳре тата çĕр ĕçĕнче пысăк опыт пухнă. Çав опыт – çĕр ĕçне йĕркелесе пырасси те, çынсемпе ĕçлесси те, хуçалăх вăйĕпе, вырăнти майсемпе тата харпăр хăй укçи-тенкипе, кредит ресурсĕсемпе пайталлă усă курасси те – çултан-çул пухăнса, пуянланса пынă. Çак никĕс çинче вăл хăйĕн хресчен-фермер хуçалăхне çуллен аталантарса пынă. Халĕ вара аталантарса пыраççĕ тесен, тен, тĕрĕсрех те пуль. Мĕншĕн тесен ывăлĕ те, Вениамин Вячеславович, хăй ячĕпе те хресчен-фермер хуçалăхĕ йĕркелесех ашшĕпе пĕрле вăй хурать. Вячеслав Владимирович çемьеллĕ çын, хĕрĕпе ывăлне иккĕшне те аслă пĕлӳ илме пулăшнă, агронома вĕрентсе кăларнă. Ывăлĕ уншăн тĕп пулăшакан, вăл Чăваш ял хуçалăх академийĕнче вĕреннĕ çулсенче те, халĕ те хресчен-фермер хуçалăхĕшĕн пысăк вăй тата малашлăх шанăçĕ пулса тăрать. Вĕренӳпе практикăна çĕр ĕçĕпе тарăннăн çыхăнтарса пĕлӳ илнĕ вăл. Хăшĕ-пĕри пек чуххăмăн вĕренмен. Çакă ăна пурнăçра пайтах пулăшĕха – ĕçе наукăпа малта пыракан технологи никĕсĕ çинче туса пыма та, çĕрĕçĕн эффективлăхĕпе тупăшлăхне ӳстерме те. Хăй ячĕпе хресчен-фермер хуçалăхĕ йĕркелесен, ăна патшалăхран грант парса пулăшасса та шанăччĕ эпĕ. Вăхăтра асăрхани, пулăшу пани темрен те пахаçке. Пĕрре çеç мар хăпартланнă эпĕ вăл çурхи ака-сухара е кĕрхи хĕрӳ ĕççенче пысăк хăватлă тракторпа епле кал-кал çĕр хатĕрленине е ку чухнехи «Палессе» комбайнпа тырă выр-са çапса машина çине бункер хыççăн бункер пушатнине курса тăрса.

Çапах та ашшĕ, Вячеслав Владимирович, патнех таврăнар-ха.

–Кăçалхи çулталăк уйрăмах ăнăçлă пулчĕ, тырă сĕрĕшсе çитĕнчĕ,–тенĕччĕ пĕр çулхине фермер. Анчах унашкал ăнăçлă çулталăксем пĕрре кăна мар пулнă унăн ĕçĕ-хĕлĕнче, шансах тăратăп, ӳлĕмрен те нумай пулĕç. Пилĕк-ултă çул каяллах фермерăн кашни гектарĕ вăтамран 30 центнер ытла тухăç парса савăнтарнăччĕ. Юлашки çулсенче те тырă тухăçĕн планки унран чакмарĕ. Ку ĕнтĕ Вячеслав Николаев фермер çĕр ĕçне чылай тараннăн пĕлсе, шанчăклă ĕçленине кăтартса парать. Кĕлетсем çулленех тырăпа тулли унăн. Пахалăхлă тырра «Чăвашçăкăрпродукт» ООО та, «Букет Чувашии» сăра завочĕ те, ытти потребительсем те хапăл туянаççĕ. Элита тата пĕрремĕш репродукциллĕ районланă паха сортсем акса тунисĕр пуçне, вăл тырра дезинфекци туса сиенсĕрлетнĕ кĕлетсене вырнаçтарать, ĕçлесе типтерлет, сортсем тăрăх пахалать. Вĕренмелли çук мар унран.

Ахальтен мар ĕнтĕ кăçалхи çураки умĕнхи пĕр канашлура район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Ванерке Çĕнçырмари хресчен-фермер хуçалăхĕн ертӳçине Вячеслав Николаева ыйту пачĕ:

–Каласа пар-ха, тархасшăн, мĕнле майпа хир сĕллине (овсюга), ытти çумкурăксене пĕтеретĕн тата çуллен пысăк тухăçлă тырпул туса илетĕн?–терĕ.

Хирĕçлесе тăмарĕ фермер, тӳрĕ кăмăлпа чунне уçса пачĕ:

–Ĕçлемесĕр пулмасть, паллах. Тырă акма тытăниччен малтан хир сĕллипе ытти çумкурăксене шăтса ӳсме условисем туса паратăп, çакăн хыççăн тин çĕре кăпкалатса хатĕрлесе тырă акма пуçăнатăп. Çумкурăксене пурне те минтевлекен гербицидпа та пĕтеретĕп. Тухăçшăн тăрăшса, минераллă удобренисемпе анлăн усă куратăп, вĕсене çуллен миллион ытла тенкĕлĕх туянатăп, усăллă веществосемпе шутласа кашни гектар пуçне 200 килограмм таран удобрени паратăп. Сортсене те çĕнетсех тăратăп, çуллен элита вăрлăхсем кӳрсе килетĕп,–терĕ.

Сăмах майăн асăнсан, тĕш тырă вăрлăхĕсене имçамламасăр вуçех те акмасть вăл. Бактериллĕ удобренисемпе, биохутăшсемпе усă курать. Çаксем пурте тырă пĕрчисем, сулмаклă пучахсем хăй тĕллĕн кăна тулманнине çирĕплетсе параççĕ. Акă кăçал та, сăмахран, фермер тырă акиччен малтан 300 гектар çинчи çумкурăксене анлăн пĕтерекен гербицидпа сапса тухнă, пулас тухăçа сăтăр кӳрекен ӳсентăрансенчен хӳтĕленĕ, вĕсем акса тăвакан тыррăн апатне туртса илесрен сыхласа хăварнă.

Минераллă тăварсем-и? Вĕсем, паллă ĕнтĕ, тухăçа пысăк вăй хушаççĕ, ӳсентăрана тутлăхлă япаласемпе тивĕçтерсе, сулмаклă, тулли пучахсем çитĕнтерме май параççĕ. Вун-вун тонна – пурĕ çĕр тоннăна яхăн аммиак селитрипе диаммофоска туянă кăçалхи çуракине хатĕрленсе Вячеслав Николаев фермер. Ывăлĕ те хăйĕн çĕр участокĕсем валли утмăл тонна кӳрсе хатĕрленĕ. Вĕсен уссине кашни çул пĕлсе-курса хаклаççĕ. Патшалăх та хăй енчен пулăшма тăрăшать çĕр ĕçченĕсене: тырă акнă кашни гектар лаптăкшăн 560 тенкĕ, элита репродукциллĕ вăрлăхпа акнă кашни гектар тырă лаптăкĕшĕн 2525 тенкĕ каялла тавăрса парать. Лайăх вăрлăх акнипе акманни вара пĕр мар. Сортлă паха вăрлăх хăех тепĕр тухăç тенĕ ĕлĕкех. Çавнашкал ыр-сывлăхлă вăрлăхсем кашни çулах туянать В.Николаев хресчен-фермер хуçалăхĕ. Кăçал та акă элита вăрлăх 60 тоннăран кая мар варăнтарнă. Вăл тикĕс шăтса тухса парка та туслăн аталанас пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Ăна валли лайăх условисем, тивĕçлĕ никĕс туса пама тимленĕ хресчен-фермер хуçалăхĕнче.

Çакна та пайăррăн кăтартса хăварас килет: Вячеслав Николаевăн машина-трактор паркĕ çулсерен çĕнĕ йышши хăватлă техникăпа пуянланса пырать, вĕсем çĕр ĕçĕнче пысăк пулăшу панине, ĕçе тухăçлă та пахалăхлă пурнăçлама май панине хавхаланса каласа параççĕ ашшĕпе ывăлĕ.

–Эпĕ çĕр ĕçĕсене май килнĕ таран сахалрах тăкакпа пурнăçлама тăрăшатăп,–астутарать Вячеслав Николаев. Çавăнпа вăл пĕр харăсах тĕрлĕ ĕç пурнăçлама пултаракан, энерги перекетлекен е сарлака илекен агрегатсемпе, технологин уйрăм сыпăкĕсене пĕрлештерсе пĕр вăхăтра туса ирттерме тимлет. Хăватлă, сарлака илекен трактор-комбайн ахаль те пурха В.Николаев хресчен-фермер хуçалăхĕн. 200 лаша вăйлă КамАЗ трактор, «Палессе» комбайн, сăмахран. Кăçалхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрленсе вара фермер татах та çĕнĕ йышши хăватлă техникăпа хĕçпăшалланнă. Çак тĕллевпе хăйĕн укçи-тенкипе те, инвестици кредичĕсемпе те усă курнă. Кăçал çуркуне туяннă пĕр ака комплексĕ кăна мĕне тăрать уй-хир ĕçĕнче. Вăл, чăн та, вĕр-çĕнĕ мар, анчах уншăн пысăк сумма кăларса хума тивнĕ. 300 лаша вăйлă трактор та «прописка» тупнă Николаевăн машина-трактор паркĕнче. Инвестици кредичĕпе 1 миллион та 200 пин тенкĕ парса туяннă «КАМА-15» сцепка-сӳре тата 1 миллион та 580 пин тенкĕлĕх «КВАРТА-5» опрыскиватель, машина-загрузчик – çаксем пурте халĕ фермер хуçалăхĕн вăй-хăватне ӳстереççĕ. Çĕнĕ техникăна ытларах ывăлĕ Вениамин Вячеславович «çăварлăхлать». Вăл, маларах асăнтăмăр ĕнтĕ, аслă пĕлӳллĕ технолог, агроном. Вячеслав Владимирович хăй те аслă пĕлӳллĕ инженер-механик, вăл Чăваш ял хуçалăх институтĕнче вĕренсе аслă пĕлӳ илнĕ. Çапла вара çĕнĕ техникăна алхапăл кунта, малаш ĕмĕтпе пурăнаççĕ, машинăсемпе тухăçлă усă курма ăнтăлаççĕ.

Вячеслав Николаев кăçал та тăватçĕр гектартан кая мар, ывăлĕ тепĕр çĕр сакăрвунă гектар çурхи тулăпа урпа çитĕнтерме планлаççĕ. Иртнĕ çулсенчи пекех, гектартан 30 центнертан кая мар тырă туса илме палăртаççĕ, пĕтĕм ĕçе çак тĕллевпе туса пыраççĕ.

–Вячеслав Владимирович хăй те, ывăлĕ те маттур. Хăйсен фермер ĕçĕсене ăнăçлă пурнăçланипе пĕрлех, ыттисене те пулăшма хатĕр вĕсем,–терĕç район администрацийĕн АПК аталанăвĕпе экологи тата экономикăпа пурлăх хутшăнăвĕсен пайĕсен начальникĕсем Николай Родионович Красновпа Любовь Ивановна Берилло. Николай Родионович çакна та хушса каларĕ:

–Вячеслав Николаев Элпус, Çĕнçырма, Пуянкасси çĕрĕсене акса тăвать. Çĕнçырмапа Элпус çĕрĕсем вара пахалăхĕпе районта чи начар та тачка çĕрсем шутланаççĕ, вĕсенче çĕрĕк тăпри (гумус) хисепĕ икĕ хута яхăн сахалрах, апла пулсан та, Вячеслав Владимирович çĕрпе пĕлсе усă курнипе, удобренисем çителĕклĕ панипе, пусă çаврăшне уяса тытса пынипе районта çуллен чи пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтерет.

Вăлах Вячеслав Николаев чылайранпа ĕнтĕ хресчен-фермер хуçалăхĕсен республикăри «АККОР» пĕрлешĕвĕн президиумĕн членĕ пулни çинчен те астутарчĕ.

Районти ял хуçалăх предприятийĕсем пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши çурхи тĕш тырă культурисем акассине вĕçлесе пынă кунсенче район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Ванерке АПК аталанăвĕпе экологи пайĕн начальникĕпе Николай Красновпа пĕрле куçăмлă аталанса тата ял хуçалăх культурисем туса илессине ку чухнехи техникăпа механизацилесе пыракан Вячеслав Николаев фермерăн уйĕсенче пулнă **(сăн ӳкерчĕкре)**, çĕнĕ техникăпа епле усă курнипе, çурхи ĕçсемпе паллашнă. Юлашки вăхăтра туяннă пур техника та юсавлă пулнине, вĕсене çурхи уй-хир ĕçĕсене явăçтарнине, ака вĕçленсе пынине каласа панă фермер. Владимир Ванерке фермера çак ĕçре ырă суннă.

И.ГЛАДКОВ.